Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

73 (7713) № ✻ Шăмат кун, 2009 çулхи сентябрĕн (авăн) 12-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

«Иккĕмĕш çăкăр» пуссисенче

Ĕçсем пĕр вырăнта тăмаççĕ

Район уй-хирĕсенче кĕрхи ĕçĕсем пур енлĕн сарăлса пыраççĕ. Çĕр ĕç культурине пăхăнса иртнĕ эрнерех çал фермер 25 гектар çĕр улми лартнă. Япăх ӳсмен вăл, анчах, çĕр ĕçченĕ калашле, типĕ çанталăк (фермер) хуçалăхĕнче пĕрремĕш çул ĕçлеместпĕр ĕнтĕ. Каланă сăмаха çирĕп тытать вăл. Çавăнпа ун паттӳлев тĕлĕшпе ыйту пулман, – каласăва хутшăнчĕ тулнă витрене сеткăна пушатнă май Нина Самушкина ĕçчен.

В. Самушкинпа В. Мешков (сулахайран сылтăмалла) темиçе çул ĕнтĕ «Гавитанра».

Нина Самушкинапа Оксана Матвеева ĕçченсем паян кунĕпех хастар.

пĕрлешӳллĕ тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсен пысăк пайĕ вырма ĕçĕсене вĕçлерĕ. Вăхăтра акса хăварнă кĕртрисен пуссисем те хăйсем пулас тухăçăн çирĕп никĕсĕ пулнине системсе пĕр харăссăн ешĕл кавирпе витĕнчĕç.

Çанталăк уяр тăнине кура районти çĕр ĕçченĕсем пĕтĕм тăрăшулăхпа тимлĕхе паян çĕр улми вăхăтра кăларса пухса кĕртесси çине уйăраççĕ. «Кашни кунĕ шутра. Паянхи ĕçе ырана хăварсан, пачах хыçала юлма тата çу каça ĕçлесе туса илнине çухатма пулать. Çак çултан пăрăнас тесе эпир паян хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех пурнăçлама тăрăшатпăр. Çакăнта хамăра пулăшакансене пысăк тав сăмахĕ калатăп», – пирĕн тĕллеве ăнланса трактор кабининчен тухса сăмах пуçарчĕ «Гавитан» хресчен (фермер) хуçалăхĕн ертӳçи Виталий Анатольевич Гаврилов.

Унччен сысна ĕрчетессипе специализациленнĕ фермер иртнĕ çуркунне виçĕм çул илнĕ уçман çерем çĕрсем çине тырă-пулă акнă, çĕр улми лартнă, уй-хирте ĕçлеме кирлĕ мĕн пур техникăна туяннă. Çапла вара 15 çул никам тĕкĕнмен, йывăç айне пулма пуçланă 100 гектар «улăхсенче» те ешĕл калча, çĕр улми çеçки çĕкленнĕ. Çав пусăсенче кăвитĕмĕсĕр те мар. Иртнĕ юн кун «Гавитан» хресчен (фермер) хуçалăхĕ çĕр улми кăларас ĕçе кӳлĕнчĕ. В. Гаврилов кустăрмаллă трактор хыçне копалка çакса хăй çĕр улми кăларать. Таса тухакан «иккĕмĕш çăкăра» пуçтарнă çĕрте вара Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Вомпăкассипе Шупуçĕнче, Юнкă ял тăрăхĕнчи Кăпасра пурăнакан вуншар çын ĕçлет.

– В. Гавриловăн хресчен ĕнче ĕçлеме те шанчăклă. Унччен сысна пăхаттăмăр пулсан, халĕ ӳсен-тăран ӳстеретпĕр. Кунта та тупăш пуласса шанатпăр, – çĕр улми пуçтарнă çĕртен уйрăлмасăр каласать Всеволод Самушкин водитель. Вăл Кăпасран кунта ĕçе çӳрекенсене çирĕп йĕркепе турттарать.

– Ĕçленĕшĕн йĕркеллĕ тӳлесен эпир вăй хума хирĕç мар. Миçе çул ĕçлетпĕр – Асăннă хресчен (фермер) хуçалăхĕнче ĕçлеме халăх валли пур условисем те çителĕклĕ. Çул çӳреме автомашина панипе пĕрлех, хирте ĕçлекенсене кăнтăрлахи апатпа тивĕçтересси те кунта иккĕмĕш вырăнта мар.

Акă копалка иртсе кайрĕ кăна, бригада ĕçченĕсем кĕске калаçуран пăрăнса çĕр улми пуçтарма пуçларĕç.

Анатолий БЕЛОВ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Çĕр улми пуçтаракан бригада ĕçченĕсен пĕр пайĕ ĕç вăхăтĕнче.

Республикăра

Хушма укçа-тенкĕ уйăраççĕ

Сентябрĕн 9-мĕшĕнче республика Президенчĕ Николай Федоров Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн ларăвне ирттернĕ. Республика пуçлăхĕ çавна палăртнă. Раççей Федерацийĕн ял хуçалăх министрĕпе Елена Скрынникпа тĕл пулнă май Чăваш Енри ял хуçалăх продукцине туса илекен предприятисен минераллă удобренисем туянма кайнă тăкакĕсен пĕр пайне саплаштарас шутпа федераллă бюджетран 44 миллион тенкĕ уйăрма май килнĕ. Пĕтĕмĕшле вара ку тĕллевпе уйăракан укçа-тенкĕ хисепĕ 130 миллион тенкĕпе танлашать. Ку хисеп иртнĕ çулхинчен 50 процента яхăн пысăкрах.

Район уй-хирĕсенче

Ĕçсем çĕр улми пуссисене куçрĕç

Пĕтĕмĕшле илсен, сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче вырма ĕçĕсем вĕçленчĕç темелле. Тырă-пулăна 12528 гектар çинчен (99,8 процент) пухса кĕртнĕ. Вырса пуçтарман 20 гектар лаптăк Мичурин ячĕпе хисепленекен чикĕллĕ яваплăхлă обществăра кăна.

Пĕтĕмпе тĕш тырă 31401 тонна вырса çапнă. Вăл шутран тулă 11433 тонна, урпа 14342 тонна. Пухса кĕртнĕ тырă-пулăн вăтам тухăçĕ гектар пуçне 25,1 центнерпа танлашать.

Çĕртме сухине1772 гектар çинче туса ирттернĕ. «Волга», «Восток», «Оринино», Суворов ячĕпе хисепленекен тата «Ударник» хуçалăхсем ку тĕлĕшпе япăх мар ĕçлеççĕ.

Кĕрхи культурăсем акма планпа 5500 гектар çĕр хатĕрлеме палăртнă пулсан, ăна çак вăхăта 6843 гектар хатĕрленĕ, кĕрхи культурăсене вара 6028 гектар çинче (109,6 процент) акса хăварнă.

Уй-хирти тыр-пул пухса кĕртес ĕçсем вĕçленсе пынă май ĕçсем çĕр улми пуссисене куçрĕç. Кăçал çĕр улмине пĕтĕмпе 1527 гектар çинчен пухса кĕртмелле. Çак вăхăта ăна 769 гектар çинчен (50,4 процент) кăларса пухнă. Вăтам тухăç гектар пуçне 142,3 центнерпа танлашать. Малтан палăртнă тăрăх, «Ударник» хуçалăхра унăн тухăçĕ гектар пуçне 200 центнера яхăн.

Камăн сăвăм пысăкрах?

ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ СЕНТЯБРĔН 10-МĔШĔНЧЕ КĂШНИ ĔНЕ ПУÇНЕ МИÇЕ КИЛОГРАММ СĔТ СУСА ИЛНИНĔ КĂТАРТНИ

Колонкăсенче: 1. Хуçалăхсем. 2. Ĕнесен йышĕ. 3. Пĕтĕмпе сĕт суса илнĕ. 4. Кăçал сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне кашни ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăм. 5. Иртнĕ çулхи çав вăхăтри сăвăм (килограмма).

Е. Андреев яч. хис.	125	1000	8,0	8,9
«Восток»	80	712	8,9	10,0
«Герой»	176	1946	11,1	14,7
К. Иванов яч. хис.				6,7
Ильич яч. хис.	241	2800	11,6	12,0
Ленин яч. хис.	90	1115	12,4	9,0
«Лидер» АФ ООО				12,5
«Оринино»	205	2523	12,3	9,5
«Передовик»	65	800	12,3	8,1
«Свобода»	291	2800	9,6	10,7
«Сеятель»				11,1
Суворов яч. хис.	200	2500	12,5	10,0
«Рассвет» АФ ООО				7,3
«Ударник»	510	6400	12,5	12,2
Чапаев яч. хис.	101	830	8,2	8,2
Чкалов яч. хис.	53	530	10,0	11,3
«Хлебороб» ООО	43	280	6,5	7,7
Ял хуçалăх пред-пе	**2180**	**24236**	**11,1**	**10,6**

Саламлатпăр

Юратнă аннене, хисеплĕ хунямана, ырă кăмăллă асаннене, тарават йăмăка, ăшă кăмăллă аппана – Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Катăкуй ялĕнче пурăнакан **Юлия Федоровна ЧЕРНОВАНА** 75 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Пире пурнăç çулĕ çине тăратнăшăн тав тăватпăр. Сана эпир юрататпăр. Ырлăх-сывлăх, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр.

Саламлаканĕсем: хĕрĕсем, кĕрӳшĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, аппăшĕпе йăмăкĕ, мăнукĕсем.

Дорогую маму, бабушку **КОЖЕВНИКОВУ Тамару Романовну** поздравляем с 65-летием!

Уходят годы безвозвратно,
Не все сбываются мечты.
Но как нам чувствовать приятно
Что есть на свете мама – ты!
Не грусти, что волосы седые,
Береги себя и не болей,
Потому что нет на белом свете
Человека ближе и родней.

С поздравлениями: муж, дети, внуки.

Пирĕн юратнă та хаклă çыннăмăра – Сарчак ялĕнче пурăнакан **Ефросиния Ильинична ИЛЬИНАНА** 85 çул тултарнă ятпа чунчĕререн саламлатпăр. Ĕмĕрӳ вăрăм, сывлăху çирĕп пултăр. Турри сана ан пăрахтăр, чирчĕре аякка сиртĕр.

Çак кунсенче унăн хĕрĕн – **Ираида Алексеевнан** – тата кĕрӳшĕн – Шарпаш ялĕнче пурăнакан **Николай Витальевич ДИМИТРИЕВĂН** юбилейĕсем пулчĕç. Вĕсене те çак ятпа саламласа ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр. Пурнăç çулĕсем такăр пулччăр.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе ывăлĕсен çемйисем, йышлă тăванĕсем.

Хаклăран та хаклă аннене, йăмăка, кукамая, асаннене, тăхлачăна, хунямана – Анаткас Апаш ялĕнче пурăнакан **Елена Васильевна ВЛАДИМИРОВАНА** 76 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Хаклă аннемĕр, эсир пире пурнăç парнелерĕр, ура çине çирĕппĕн тăратрăр, пурнăç çулĕ çине тухма пулăшрăр. Эпир сана ăшă кăмăлушăн, пур вăхăтра та пире пулăшма май тупнишĕн тав тăватпăр. Пирĕн анне Исетерккĕри фермăра ĕмĕрĕпех ĕçленĕ. Парнесем илме тивĕç пулнă. Хисеплĕ ĕçчен çын пулнă. Тавах сана пуриншĕн те. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр. Çирĕп сывлăхлă пулса ачăрсене, мăнукăрсене савăнтарса пурăнмалла пултăр.

Салампа: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, мĕн пур тăванĕсем.

Йӳçкасси ялĕнче пурăнакан **Тамара Афанасьевна ЛАЗАРЕВАНА**, СССР сывлăха сыхлас отличникне, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачне сентябрĕн 14-мĕшĕнче çуралнăранпа 80 çул çитнĕ ятпа ăшшăн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, телей сунатпăр.

1955 çулта Хусанти медицина институтне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн (хĕрлĕ дипломпа) Йӳçкасси больницине ĕçлеме яраççĕ. Пĕр канми 40 çул ытла 1994 çулччен врач пулса нумай çыннăн сывлăхне упрас тесе тăрăшса вăй хунă.

Кун-çул иртнишĕн ан кулянăр –
Тата мĕскер сире сĕнер...
Мул çук пулин, ăспа пуян,
Кăмăлăрпа хитре эсир!

Саламласа: Йӳçкасси аптекин коллективĕ.